23-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

1942 ИЮЛЬ 12 ВЫРСАРНИКУН 161(6096) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕнче

1942 çулти тырпулран Хěрлě Çар валли тырă фончě тăвасси çинчен

Хěрлě Çар ытларах тырă ыйтнине тивĕçтерес шутпа 1942 çулхи тырпултан Хěрлě Çар валли тырă фончě тума колхозсем вăйăлланнине ырласа, ССР Союзěн Халăх Комиссарěсен Совечě тата ВКП(б) Центральный Комитечě çапла йышăнать:

1. 1942 çулхи тырпултан Хěрлě Çар валли 145 миллион пăт [illegible] тырă фончě тăвас.

2. ССР Союзěн Хатěрлев Наркоматне çапла тума хушас: республикăсен совнаркомěсене, облаçсенчи (крайсенчи) исполкомсене, союзлă республикăсен компартийěсен Центральный Комитечěсене, ВКП(б) Обкомěсене тата Крайкомěсене пěрле, 1942 çулхи июлěн 20-мěшěнчен кая юлмасăр, Хěрлě Çар валли уйăракан тырă фондне [illegible] колхозсем [illegible] Хěрлě Çар фондне тырă памалли районсем тăрăх хумалла.

3. Çапла тăвас: колхозсем 1942 çулхи тырпултан Хěрлě Çар фондне [illegible] тырă парас ěçре [illegible] обязательствăсене [illegible] пулассă.

Америкăн нацилле праздникě ячěпе М. И. Калинин тата Франклин Д. Рузвельт пěр-пěрин патне телеграммăсем янă

Америкăн Пěрлешӳллě Штачěсен июлěн 4-мěшěнче палăртакан нацилле праздникě — «Никама пăхăнманлăх кунě» çитнě май СССР Верховный Совечěн Президиумěн Председателě М. И. Калинин юлташ Америкăн Пěрлешӳллě Штачěсен Президенчě г. Франклин Д. Рузвельта çакăн пек телеграмма янă:

«Сирěн нацилле праздник — Америкăри Пěрлешӳллě Штатсен Никама пăхăнманлăх Кунě çитнě май Сирěнтен, господин Президент, Совет Союзěнчи халăхсем чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр, [illegible]

Эпě çирěппěн шанса тăратăп: пирěн [illegible] гитлерла Германие [illegible] прогрессивлă этемлěхěн тăшманне [illegible]».

МИХАИЛ КАЛИНИН.

М. И. Калинин г. Франклин Д. Рузвельтран çакăн пек ответлă телеграмма илнě:

«Никама пăхăнманлăх туса хунине [illegible] Америка халăхне [illegible]

Мана хама [illegible]».

ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙĚ

Германири информаци бюровě тата Швецири «Афтонтидинген», «Свенска Дагбладет» хаçатсем пěлтерӳ пичетлесе кăларнă; çав пěлтерӳсем тăрăх, совет подводнăй лодкисем Швеци территорийне кěрекен шывсенче июнěн 22-мěшěнче Швеци «Ада Гортон» ятлă пароходне торпедăланă тата июлěн 1-мěшěнче «Галеон» пароход çине торпеда янă иккен. Швецин телеграф агентстви пěлтернě тăрăх, июлěн 6-мěшěнче Швеци çар карапěсем сыхласа пыракан судносен караванě çине торпеда яма хăтланса пăхнă пулнă.

ТАСС çапла пěлтерме полномочи илнě: совет подводнăй лодкисем Швеци территорийне кěрекен шывсенче пулса иртнě çак мěнпур инцидентсемпе нимěнле çыхăну та çук.

АГИТАЦИ ĚÇĚН ПАХА МАЙĚСЕНЧЕН ПĚРИ

Предприятисенче, колхозсенче, учрежденисенче çěнě хаçатсемпе çěнě хыпарсем çапма витринăсем тунă. Çав витринăсене лайăх йěркелени, малтан кăларса çакнă хаçатсене çěннисемпе улăштарса тăни, Совет Информаци Бюровěн пěлтерěвěсене яланах кăларса çакни пирěн ěççыннисене çěршыври тата фронтри событисемпе вăхăтра паллаштма май парать.

Нагляднăй агитацие, уйрăмăн илсен витринăсене, лайăх йěркелени производствăра çитěнӳсем тума пулăшать. Сăмахран, Сěнтěрвăрринчи судоверфьре витрина çине çěнě хаçатсене, производствăра мěнле ěçленине кăтартакан материалсене вăхăтра кăларса çакаççě. Кашни кунах рабочисем ěçрен пушă вăхăтра çав материалсене вулаççě. Çакă вара вěсене пěр-пěринпе ăмăртса ěçлеме хавхалантарать. Судоверфь производство программине ăнăçлăн тултарса пырать. Шупашкарти табак фабрикинче те витринăри хаçатсене вăхăтра улăштарса тăраççě, унта кашни кунах çěнě хаçат вулама пулать. Малта пыракан ытти предприятисенче те витринăсене лайăх йěркеленě. Чылай ялсенче тата колхозсенче хаçат витринисем пур. Елчěк районěнчи Энтепери Максим Горький ячěпе тăракан колхозра витринăри хаçатсене вăхăтра улăштарса тăраççě, отечественнăй вăрçă çинчен калакан çěнě материалсене кăларса çакаççě. Çак ěçшěн ответлă пулса тăма Казакоз учителе уйăрнă. Вăл ку ěçе юратса туса пырать. Çěнě хаçатсене, колхозра тухакан стена хаçачěсене çийěнчех витрина çине çапать. Ирхине ěçе каяс умěн тата каçхине ěçрен таврăнсан, колхозниксемпе колхозницăсем витрина патне пырса, унти хаçатсене вулаççě.

Анчах нумай предприятисенчи, колхозсенчи тата учрежденисенчи партипе комсомол организацийěсем тата агитколлектив руководителěсем хаçат витринисене йěркелесси çине сахал çаврăнса пăхаççě-ха. Акă, машинно-тракторнăй станцисене илер. Канашри тата Елчěкри МТС-сен килкартисенче витринăсем çук. Елчěк районěнчи чылай ялсенче витринăсем эрни-эрнипех пушă тăраççě. Кушкăра краскăпа сăрласа илемлетнě, кантăклă витрина пур, вăл уйăхěпех пушă ларать, унăн ăшне çěнě хаçатсем çапасси çинчен агитколлектив руководителě Дудкин юлташ аса та илмест. ВКП(б) Комсомольски райком çуртěн халхи çинче илемлě витрина çакăнса тăрать, вăл пушах, унăн çинче хăçан та пулсан, тен, хаçат пулнă пулě, анчах унта хаçат çакăнса тăнин йěрри те юлман.

ВКП(б) Центральный Комитечěн пропагандăпа агитаци управленийě тата партин Чăваш Обкомě хаçат витринисем халăха кулленхи событисемпе вăхăтра паллаштарас ěçре пысăк вырăн йышăнса тăнине пěр хут кăна мар кăтартса панă, хаçат витринисен хисепне нумайлатма тата вěсемпе лайăхрах усă курма хушнă. Çавна ВКП(б) райкомěсен, пуçламăш парторганизацисен пурнăçа кěртсе пырас пулать. Халăх нумай иртсе çӳрекен вырăнсенче пур çěрте те — предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче, урамсенче, площадьсенче, пасарсенче, вокзалсенче, пристаньсенче хаçат витринисем пулмалла. Вěсем çине хаçатсен çěнě номерěсене, Совет Информаци бюровěн пěлтерěвěсене кăларса çакнине райком работникěсен, пуçламăш парторганизаци секретарěсен, агитколлектив руководителěсен кашни кунах тěрěслесе тăмалла.

Государствăна тырă параççě

ЭЛĚК. 1942 çулшăн обязательство шучěпе государствăна тырă хывтерес пахни уборка ěçěсене нумай çăмăллатать. Сакна шута илсе, районри колхозсем государствăна вăскасах тырă параççě. Çак кунсенче Эрменкасинчи «Труд» колхоз 54,31 центнер, Писěнри «Рой» колхоз—44,63, Татмăшри Молотов ячěпе тăракан колхоз — 18,02, Хитекушкěнчи «Çěнě çул» колхоз 16,39 центнер тырă Заготзерно пунктне леççе панă.

М. КУСТИКОВ.

Совет Информаци Бюровěнчен

Июлěн 10-мěшěнчи каçхи пěлтерӳ

Июлěн 10-мěшěнче Воронежран хěвеланăçнерех вырăнта хаяр çапăçусем пулса пынă.

Пирěн войскăсем Россошь хулинчен тухса кайнă, çапăçусем Кантемировка районěнче пулса пынă.

Лисичанск енче противникăн наступлени тума тытăннă войскисене хирěç çапăçусем пуçланса кайнă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлěн 9-мěшěнче пирěн авиацин чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 55 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 230 автомашинине пěтерсе тăкнă е сиенленě, полевой тата зенитнăй артиллерин 2 дивизионне пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпěнтерсе янă, чугунçул çинчи состава çěмěрнě, канонерски лодкăна путарнă, пěр эсминеца, икě канонерски лодкăна тата икě катера сиенленě, противникăн пехотине пěр полка çити сапаласа янă, вěсенчен пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран хěвеланăçнерехри участоксенчен пěринче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Мазнеченко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем халăх пурăнакан пěр пункта, противник темиçе хут та атакăланă-скере, çирěп хӳтěлесе тăнă. Çав çапăçура час-часах штык вěççěн çапăçса, нимěç салтакěсемпе офицерěсене 300 çынна ытла пěтерсе тăкнă, 7 автомашина, танксене хирěç пемелли тупă, пулеметсем тата темиçе пин патрон тытса илнě. Лару-тăру çивěчленсе кайнă самантра противникăн пулемечě пирěн пехотăна малалла кайма чарса лартнă. Синельников лейтенант гранатăсем илсе тăшманăн пулемечě патне шуса пынă та пулеметчика вěлернě. Унтан пулемета противник енне çаврăрса лартса, вăл çав пулеметран персе темиçе вуншар гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Тепěр участокра халăх пурăнакан пысăк пунктшăн тата чугунçул станцийěшěн виçě кун хушши хаяр çапăçусем пынă, çав пунктсем темиçе хутчен аларан-алла куçнă. Çав участокра противникăн пěр кун хушшинче кăна 600 салтакěпе офицерě ытла пěтнě. Халăх пурăнакан çав пункта тата станцие каç пулас умěн пирěн войскăсем хăйсен аллинче тытса тăнă.

* * *

Пирěн войскăсем Россошь хули районěнче икě талăк хушши пěр чарăнмасăр тата вăйлăн çапăçнă. Противник фронтăн çав енне танксемпе мотопехотăн пысăк вăйěсене янă. Темиçе хут вăйлăн çапăçнă хыççăн, противник хěснипе, пирěн чаçсем оборонăн çěнě рубежě патне чакнă.

* * *

Гришин юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллерист-гвардеецсем (Калинин фрончě) юлашки кунсенче нимěç салтакěсемпе офицерěсене 1.000 çынна çити вěлернě, 3 танк, груз тиенě 14 автомашина, 6 станковăй пулемет тата орудисен батарейине пěтерсе тăкнă, орудисен 3 батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă. Çав участокра Пушкарев юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем 400 гитлеровеца пěтерсе тăкнă тата нимěçсен 16 танкне çěмěрнě.

* * *

Разведчиксем Шаповаловпа Шитов юлташсем çапăçу вăхăтěнче нимěçсем йышăнса тăракан яла кěрсе кайнă. Вăтă колхозник боецсене нимěçсен чаçěн штабě ăçта вырнаçнине кăтартса панă. Пирěн боецсем штабăн çуртне çěмěрсе кěрсе кайнă та, гранатăсем ывăтса, офицерсен ушкăнне пěтерсе тăкнă тата паха документсем тытса илнě.

* * *

Н-ски чаçри снайперсем пěр кун хушшинче 101 гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Снайперсем Григорьевпа Осадчий юлташсем 14 нимěç оккупантне пěтерсе тăкнă. Снайперсем Самадуров, Петрусев, Павленко тата Гулин юлташсем кашниех 4-шар гитлеровеца пěтерсе тăкнă.

* * *

Брянск облаçěнчи партизансем юлашки çапăçусенче противникăн 770 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Партизансем чугунçул çинчи 2 эшелона ӳпěнтернě тата нимěçсен пěр танкне çунтарса янă.

* * *

Ленинград фронтěнче кěрешекен Н-ски чаçри боецсен пěр ушкăнě нимěçсен фашистла ирсěрěсем калама çук тискер ěçсем туни çинчен акт çырнă. Çав актра çакна кăтартса панă: пěр участокра нимěçсенчен тытса илнě блиндажра красноармеецсемпе Хěрлě Çар командирěсен 5 виллине тупнă. Вилнисем камсем иккенне пěлме май килмен. Пур вилесем çинче те çав çынсене ытла та хăрушшăн асаплантарнин йěрěсем пур. Пěр красноармеецăнне икě аллине те касса татнă. Тепěр красноармеецăн мăйне тăлапа хытă туртса çыхса хунă. Ытти виçě боецăн куçěсене чавса кăларнă, çӳçěсене çунтарса янă тата вěсене пăвнин йěрěсем пур. Çав акта старши политрук Смолин, 3-мěш рангри çар врачě Варваркин, старши лейтенант Вохминов, красноармеецсем Смахтин, Игнатьев, Урасташиров тата Овченков алă пуснă.

* * *

Поляк партизанěсем пěр хула таврашěнче гестапо отрядне çапса аркатнă. 50 оккупанта вěлернě. Вăрманта пулнă тытăçура партизансем 10 гитлеровеца ытла вěлернě, çав шутра Петроковски округри гестапо руководительне те вěлернě.

* * *

Феррарăра (Итали) хěçпăшалсен пысăк склачě çунса кайнă. Фашистла влаçсем айăплисене тупма хăтланни ăнăçусăр пулнă.

* * *

Социализмлă Ěç Геройě Быховский юлташ директор пулса тăракан завод июнь уйăхěнче хěçпăшал туса кăлармалли плана ирттерсе тултарнă, халě вăл кăтартса панă график тăрăх ěçлет. Струнниковпа Палкин юлташсем начальниксем пулса тăракан цехсем фронт валли планран ирттерсе çар техники нумай туса кăларнă. Юлашки темиçе уйăх хушшинче çав заводăн коллективě 1000 хěрарăма иккěмěш, кăткăсрах специальноçсене вěрентсе çитернě.

Июлěн 11-мěшěнчи ирхи пěлтерӳ

Июлěн 11-мěш ыран тěнě чух çěрле пирěн войскăсем противника хирěç Воронежран хěвеланăçнерех вырăнта, Кантемировка районěнче тата Лисичанск енче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Воронежран хěвеланăçнерех вырăнта кěрешекен пирěн чаçсем противника питех те пысăк çухатусем тӳстереççě. Чухин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн гвардеецěсем нимěçсен 2.500 салтакěпе офицерне вěлернě, 10 танк, 3 броневик, тěрлě калибрлă 47 оруди, 10 миномет, 25 пулемет, 17 автомашина тата 4 тягач пěтерсе тăкнă. Черниенко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн танкисчěсем темиçе кун хушшинче 72 оруди тата противникăн салтакěсемпе офицерěсене 4.000 çынна çити пěтерсе тăкнă. Танкăн Богомолов, Пшенин тата Берта юлташсенчен тăракан экипажě нимěçсен 2 танкне тата 100 гитлеровеца ытла пěтерсе тăкнă. Танк командирě Рожикин лейтенант, юлашки темиçе кун хушшинче виçě çапăçура пулса, нимěçсен 2 танкне тата танксене хирěç пемелли 3 туппине пěтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончěн участокěсенчен пěринче пирěн чаçсем нимěçсене халăх пурăнакан П. пунктěнчен хăваласа кăларнă. Çапăçу хирěнче тăшманăн çěршер вилли выртса юлнă. Нимěçсен 5 танкне, 2 орудине, 2 тягачне, боеприпассем тиенě 15 лавне тата противникăн пехота турттарса пыракан 15 машинине пěтерсе тăкнă. Тепěр участокра пирěн танкистсем, пехотăпа çыхăнса кěрешсе, нимěçсен 2 танкне, танксене хирěç пемелли 4 орудине тата 8 пулеметне пěтерсе тăкнă. Нимěçсен 150 салтакпа офицерě ытла вилсе юлнă. Пирěн çав участокрах кěрешнě танкистсен тепěр ушкăнě нимěçсен 3 йывăр танкне, танксене хирěç пемелли 2 орудине тата 200 гитлеровеца çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Кěçěн лейтенант Лысенкăн артиллери батарейи нимěçсен 7 дзотне, миномет батарейине тата 8 пулеметне пěтерсе тăкнă.

* * *

Капитан Коротков командир пулса ертсе пыракан пирěн разведчиксен ушкăнě нимěçсен Т. ялěнчи гарнизонě çине сасартăк пырса тапăннă. Хаяр çапăçура çав гарнизона аркатса тăкнă. Противникăн 40 салтакěпе 2 офицерě вилнě. Пирěн боецсем 3 пулемет, винтовкăсем, автоматсем тата ытти тěрлě хěçпăшалсем тытса илнě.

* * *

Витебск облаçěнчи партизансем Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячě 150 оккупанта вěлернě, нимěçсен 3 танкне тата 10 автомашинине çунтарса янă.

* * *

Нимěçсен 112-мěш пехотнăй дивизийěнчи 110-мěш полкран тыткăна лекнě салтак Адольф Шульц çапла каласа панă: «Гомельпе Брянск хушшинчи çула партизансем час-часах тапăнаççě. Вěсем йышлă мар транспортсемпе салтаксен вак ушкăнěсене çеç мар, пысăк подразделенисемпе колоннăсене те тапăнаççě. Сыхланас шутпа çар влаçěсем халь чугунçул тăрăх сахалтарах çӳретеççě. Поездсем кăнтăрла çеç çӳреççě, анчах, апла пулсан та, аварисемпе крушенисем чарăнмаççě. Çав çулăн пěтěм тăршшěнче çулăн икě енěпе çěмěрěлнě паровозсемпе вагонсем йăваланса выртаççě».

* * *

Бельги патриочěсем нимěç оккупанчěсене хирěç кěрешеççě. Июнь уйăхěн вěçěнче Ледеберг станцинче темиçе бомба çурăлса кайнă. Поездсем çӳретесси темиçе кунлăха чарăнса ларнă. Граммонра эсэсовецсен казарминче взрыв пулнă. Брюссельре бельгиецсен «доброволецěсем» текенскерсен эшелонне хěвелтухăç фронтне янă чухне вокзалра бомба çурăлса кайнă. Вилнисем те, аманнисем те пур.

* * *

Минометлă хěçпăшалсен Наркомачěн предприятийěсем хăйсем туса кăларакан продукцие кунсерен ӳстерсе пыраççě. Полянцев юлташ директор пулса тăракан завод июнь уйăхěнче май уйăхěнчинчен икě хут ытларах боеприпассем туса кăларнă. Раховский юлташ директор пулса тăракан заводра ěç тăрăх ěçлекен рабочисенчен 40 проценчě пěр сменăра икě норма ытла тултараççě.

ДЪЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр-Хěвеланăç фрончě). **Укерчěк çинче:** пирěн боецсем тăшманăн таплě çине танксене хирěç пемелли пăшалтан переççě.

(Союзкинохроника журналěнти кадр).

Красноармеецăн паттăрлăхě

Пирěн разведчиксем нумаях пулмасть, çапăçу хирěнчен пěр красноармеецăн виллине илсе тухрěç. Çав красноармеец пирěн Чăваш республикинчен пулнă, вăл Шупашкар районěнчи Апаш çынни.

Çак красноармеец çапăçура амансан, нимěçсем ăна тыткăна илнě. Нимěç фашисчěсем тыткăна лекнě красноармеецран Хěрлě Çар çинчен сведенисем илес тесе, ăна темтери асаплантарса пěтернě. Фашистла тискер кайăксем çак красноармеецăн аллисене çурăм хыçне çыхса лартнă, питěнчен, кăкăрěнчен тата хырăмěнчен штыкпа тата çěçěпе чикнě. Унăн икě куçне те çěçěпе чиксе шăтарнă.

Тем тěрлě асап курнă пулсан та, фашистла ирсěрсем пирěн орденлă Чăваш республикин шанчăклă ывăлěнчен Хěрлě Çар пирки нимěнле сведени те илеймен. Çак красноармеец совет воинěн паттăрла вилěмěпе вилнě.

Кěçěн лейтенант П. ПАВЛОВ.

Республикăн уйхирěсенче

Колхоз социализмлă ăмăртура

Алгазинори «Чăваш Коммуни» колхоз членěсем (Калинински район) ялхуçалăхěнчи ěçсене пысăк тимлěхпе туса пыраççě. Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вěсем тырăсене вăтам шутпа кашни гектартан 16-шар центнер, çěрулмине — 123-шер центнер, махоркăна 16-шар центнер туса илме обязательство илнě. Çак обязательствăсене пурнăçлассишěн халě колхозра кашни çын кулленех ывăнма пěлмесěр ěçлет. Колхозниксем 282 гектар çинчи тырăсене çумкурăкěсенчен пысăк пахалăхпа тата вăхăтра тасатрěç, 31 гектар çěрулми купаларěç, 8 гектар çинчи махоркăна мотыгăсемпе кăпкалатрěç, 5 гектар çинчи пахча-çимěçсене çумкурăкěсенчен тасатса çемçетсе тухрěç. Чылай колхозниксемпе колхозницăсем ěç нормине кулленех 120—200 процент пурнăçласа пыраççě. Уйхир ěçěнче А. Кулаевская юлташ ертсе пыракан бригада уйрăмах паха тěслěхсем кăтартса ěçлет.

Колхозăн выльăх-чěрлěх фермисенче ěçлекенсем те Пěтěм Союзри ăмăртăва хутшăннă, хăйсем çине илнě обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççě. 1942 çулта выльăх-чěрлěх ěрчетмелли плана колхоз паянхи куна пур йышши выльăхсем енěпе те ирттерсе пурнăçланă. Лашасем унăн планпа пăхнинчен 6 пуç ытларах, ěнесемпе пăрусем планра кăтартнинчен 5 пуç ытларах, сыснасем планра кăтартнă 160 пуç вырăнне 235 пуçа çитнě. Сурăхсем ěрчетессипе чăх-чěп ěрчетесси те ăнăçлăн пулса пыраççě. Сурăх ферминче кăçал кашни 9 сурăх пуçне 12 путек илнě. Кашни сурăхран çулталăкне 2,3 килограмм çăм илмелле пулсан, пěрремěш хут кассах 1,7 килограмм çăм илнě. Чăх-чěп ферминче те ӳсěмсем пысăк. Кашни чăхран çулталăкне 75 çăмарта пухмалла пулсан, фермăра ěçлекенсем ку тарана çитсе чăх пуçне 55-шер çăмарта пухнă. Конюх Ф. Андреев, доярка В. Семенова—выльăх-чěрлěхсен йышне ӳстерес ěçри стахановецсем.

Колхозниксемпе колхозницăсем тырăсене пухса кěртес ěçе тимлěн хатěрленеççě. 266 çурла, икě жнейка, пěр лобогрейка, 58 урапа хатěрлесе хунă, 81 лаша валли кӳлмелли хатěрсем юсаса çитернě. Çěнě тырра кěртсе капана хывма 6 итеме хырса тасатса хунă. Халě колхозниксемпе колхозницăсем улăх утине çулса пухас ěçре хěрӳллěн ěçлеççě.

Колхозра 12 агитатор ěçлет. Вěсен ěçне комсомолăн пуçламăш организацийěн секретарě Ф. Демьянова ертсе пырать. Агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсене Совет Информаци Бюровěн пěлтерěвěсене тăтăшах вуласа параççě. Кашни бригадăрах стена хаçачěсем тухса тăраççě. М. Ласточкина, А. Ананьев, Н. Долгов, В. Сапожникова агитаторсем политикăллă-массăллă ăнлантару ěçне куллен тимлěн туса пыраççě.

Г. МАТВЕЕВ.

БРИГАДИРСЕН ĚÇРИ ОТВЕТЛĂХĚ ÇИНЧЕН

ИШЛЕИ, июлěн 10-мěш. (Телефонпа). Мамăш ялсоветěнчи колхозсем улăхсенчи утта çулма июлěн 8-мěшěнче тытăнчěç. Çак кун «Коммунист» колхозăн пěрремěш бригадинче дисциплина начарри курăнчě. Бригадир пулса ěçлекен Роман Львов колхозниксене утă çулма ертсе тухас чухне вăл кун ěçкěре пулнă. Ěçре никам та ертсе пыман пирки утă çулма бригадăра пурě те 5 колхозница çеç тухнă.

Çав кунах комсомолка Надежда Иванова ертсе пыракан бригада утă çулас ěçе организованно тухрě. Надежда Иванова хăй ěçре колхозницăсене пример кăтартса пынипе бригада пěр кун хушшинче 3 гектар утă çулчě. Колхозницăсем утă çулма хěвел тухиччěнех тухаççě те мěн тěттěм пуличчěнех ěçлеççě. М. Краснова, М. Новикова, И. Любимова тата ытти колхозницăсем ěç нормине тăтăшах 140—150 процент тултарса ěçлеççě.

Утă çулас ěçе колхоз куçса килнě çынсене те хутшăнтарать. Вěсене колхозăн правленийě çавасем илсе панă. Çапла «Коммунист» колхоз, малтанхи кунсенче пулнă кăлтăксене хăвăрт пěтерсе, кěске вăхăтрах 15 гектар утă çулчě.

Ялсоветри ытти колхозсенче те утă çулас ěç хěрӳллěн пырать. Паянхи куна кунта пурě 38 гектар утă çулнă.

З. МИТРОФАНОВА.

Пěр кун хушшинче 30 гектар утă çулнă

КАНАШ, июлěн 11-мěш. (Телефонпа). «Хěрлě Çар», «Чăваш ЦИК», Киров ячěпе тăракан колхозсем тата районри ытти колхозсем те утă çулма массăллăн тытăннă. Утă çулнă çěрте колхозниксем пысăк çěкленӳпе ěçлеççě. «Хěрлě Çар» колхоз пěр кун хушшинче 30 гектар çаран утти çулнă. Ку ěçре колхозăн Федоров юлташ ертсе пыракан бригади паха тěслěхсем кăтартнă.

Ф. МАЛЫШКИН.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Тăшман малаллах талпăнать

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. **(ТАСС спецкорĕ).** Фронтăн уйрăм участокĕсенче çапăçусем малтанхи пекех хаяррăн пыраççĕ. Противник, хăйĕн вăйĕсене йĕркеленĕ хыççăн, оборона линине татса, пирĕн войскăсем йышăнса тăракан вырăна тарăнăн савăлланса кĕме темиçе хутчен те хăтланса пăхнă.

Пирĕн Н-ски стрелковăй чаçа нимĕçсем пысăк вăйĕсемпе пилĕк хутчен атакăланă, çав атакăсене пирĕн боецсем кашнинчех тăшмана пысăк çухатусем кÿрсе сире-сире пăрахнă. Нимĕнле çухатусем тÿсинне пăхмасăрах, тăшман малалла талпăнать. Фронтăн участокĕсенчен пĕринче хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Малтан противникăн артиллерийĕ пеме тытăннă, унтан çапăçăва 200 танка çити кĕрсе кайнă. Вĕсем хыççăн пехота пынă. Танксем ушкăнăн-ушкăнăн тарăна каякан эшелонсемпе шунă. Çакăн пек пырса çапнă ăнăçлă пулассине нимĕçсем малтанах шанса тăнă. Анчах та вĕсен ĕмĕчĕ йăнăш пулнă. Боецсем шикленсе ÿкмен. Танкистсемпе артиллеристсем, минометчиксемпе пехотинецсем тăшманăн çулне пÿлсе, хурçă стена пек тăнă. Пĕрремĕш атакăра нимĕçсем 10 машина çухатса, каялла чакнă. Тепĕр темиçе минутăран пирĕн позицисем çине тăшман танкĕсен çĕнĕ хумĕ куçса килме тытăннă, анчах ку хутра та пирĕн боецсен тăвăллă вучĕ айне лекнипе тăшмана ирĕксĕрех малтанхи позицисене чакса ларма лекнĕ.

Тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçнă çĕрте Молдавин юлташ командир пулса тăракан подразделени хăйне уйрăмах палăртнă. Вăл тăшманăн 10 танкне вут хыптарнă, танксене хирĕç пемелли икĕ орудине пĕтерсе тăкнă, 250 фашиста çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Машинăсемпе пĕрлех нимĕçсем çапăçăва пехотăна йышлăн хăваласа кĕртеççĕ. Противникăн автоматчикĕсем пĕр батальона яхăн пирĕн танковăй часть вырнаçса тăнă çĕре савăлланса кĕме хăтланнă. Пытанса ларакан танкистсем тăшмана çывăха пыма панă та унтан вăйлăн пеме тытăннă. Çакăнтан фашистсенчен сахалăшĕ тарса хăтăлнă.

Вăйлă çапăçусем малалла пыраççĕ. Противник вăйлăн хĕснине пирĕн войскăсем çирĕппĕн чарса тăраççĕ, тăшмана пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Малти позицире противникăн пысăк вăйĕсем куçнине асăрханă. Нимĕçсен хăйсен вăйĕсене атака валли пухнă. Вĕсен планĕсене аркатмалла! Çак задачăна пурнăçа кĕртме Н-ски чаçри танкистсемпе артиллеристсене хушнă. Пирĕн танксем тăшманăн колоннисем çине çил-тăвăл пек пырса кĕнĕ, вĕсене вут-çулăмпа, броньăпа тата гусеницăсемпе таптаса лÿчĕркесе тăкнă.

Нимĕçсен атакисене сирсе янă çĕрте пирĕн авиаци малтанхи пекех пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пĕр кун хушшинче пирĕн летчиксем нимĕçсен 25 танкне пĕтерсе тăкнă, 50 автомашинине ытла çунтарса янă, сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ.

З. ЛИПАВСКИЙ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозри коммунистсем

Ленин ячĕпе тăракан колхозри (Елчĕк районĕ) пуçламăш парторганизацинче пурĕ 10 коммунист, çак шутра 3 хĕрарăм. Коммунистсем пурте колхоз производствин ответлă участокĕсенче ĕçлеççĕ.

Мартынов юлташ—колхоз председателĕ тата вăлах пуçламăш парторганизацин секретарĕ. Вăл ертсе пынипе пуçламăш парторганизаци колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пырать.

Виссарионов юлташ бригадир пулса ĕçлет, вăл отечественнăй вăрçăра нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ. Халĕ Виссарионов юлташ колхоз ĕçне пĕтĕм вăйне хурать. Унăн бригади колхозра малта пырать, çуракинче тĕштырăсене акассине 8 кун хушшинче туса пĕтерчĕ.

Çамрăк коммунистка Еливанова юлташ колхозри пĕр ĕçрен те юлмасть, çуракинче сухаç пулса ĕçлесе, нормăна кашни кунах ирттерсе тултарса пычĕ, норма тăрăх кунне 1,25 гектар сухаламалла пулнă пулсан, вăл 1,40—1,50 гектар сухаланă. Халĕ Еливанова юлташ бригадир пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн бригадипе çум çумласа пĕтернĕ. Унăн бригади тырпула пĕр тăкаксăр тата кĕске вăхăтра пухса кĕртме хатĕрленсе çитнĕ.

Начарова юлташ счетовод пулса ĕçлет. Вăл колхозра учет ĕçне лайăх йĕркеленĕ, унта ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пыраççĕ. Начарова юлташ общественăллă ĕçре те активлă. Филимонова юлташ—садовод, Катюков юлташ—колхоз мельникĕ пулса ĕçлеççĕ. Коммунистсем производствăра малта пырса колхозниксен массисене хăйсен хыççăн илсе пыраççĕ.

Партин колхозри организацийĕ ялти актива пĕрлештерсе тăрать. Малта пыракан, ĕçре пултарулăх кăтартакан активистсем парти ретне кĕреççĕ. Юлашки вăхăтра парти членĕн кандидатне ялти активиста, белофинсене хирĕç кĕрешнĕ Мисяков юлташа илнĕ.

Партин колхозри пуçламăш организацийĕ партипе правительствăн постановленисене яланах вăхăтра сÿтсе-явса, татăклă решенисем йышăнать. Çавăнпа та Ленин ячĕпе тăракан колхоз хуçалăхлă ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырать.

М. ЛАСТОЧКИНА,
ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Шкулсем вĕренÿ çулĕ умĕн

ШАХАСАН. **(Хамăр корр).** Районри шкулсем вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Пĕтĕм районĕпе илсен, вĕренÿре ĕлкĕрсе пыракан ачасем 86 процент пулнă. Чылай шкулсем вĕренÿ çулне начар мар вĕçленĕ. Шăхасанти вăтам шкулта (директорĕ В. Нимаков юлташ) вĕренекен ачасен пĕтĕм хисепĕнчен 95,6 проценчĕ вĕренÿ çулне лайăх паллăсемпе вĕçленĕ. Çавăн пекех Çĕнĕ Мамăшри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем те иртнĕ вĕренÿ çулне лайăх дисциплинăпа, вĕренÿре ĕлкĕрсе пырассине 96 процента çити хăпартнипе пĕтерчĕç. Ку шкулăн директорĕ Васькова юлташ ĕçе лайăх ертсе пычĕ. Ухман ялсоветĕнчи Ямурзари пуçламăш шкул та (шкул заведующийĕ Семенов юлташ) вĕренÿ пахалăхне кирлĕ вырăна лартнă. Ку шкулти ачасем пурте вĕренÿре 100 процентпех ĕлкĕрсе пынă. Вĕренÿре ĕлкĕреймесĕр пĕр класра иккĕмĕш çул ларакансем пĕрре те çук. Кунашкал тĕслĕхсем районри ытти шкулсенче те пур.

Халĕ районри шкулсем умĕнче çĕнĕ вĕренÿ çулне кăтартуллăн хатĕрленсе кĕтсе илес задача тăрать. Çак тĕлĕшпе илсен, кальхи вăхăтра районри пур шкулсенче те ĕç çитеĕклĕ вырăнта тăрать теме çук-ха. Уйрăмăнах шкулсем валли вутă хатĕрлес ĕç начах çитеĕксĕр. Районри шкулсем валли 4.946 кубометр вутă кирлĕ. Анчах та паянхи куна 375 кубометр çеç хатĕрленĕ, турттарса хатĕрлеме 900 кубометр çеç туяннă. Шкулсем валли вутă хатĕрлес ыйту çивĕччĕн тăрать пулин те, райлесзаг, райплан шкулсене вутă тупса парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Шкул çуртĕсене юсас енĕпе ĕç пушшех те çителĕксĕр пулса пырать. Районра халĕ 15 шкул çуртне çеç юсанă. Ку вăл питех те çителĕксĕр. Шуркассинчи тата Ăвăспÿрт Кипечри вăтам шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме пачах та тытăнман. Ку шкулсем хăйсен çĕр участокĕсене пахча-çимĕçсем лартмасăрах хăварнă.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Шкулсене ремонт тума райсоюз пăтасем, краскăсем, мел тата ыттисене те илсе килмен.

Вĕренÿре кирлĕ учебниксем енĕпе ĕç аптрамасть теме пулать. Ачасем кирлĕ кĕнекесене пĕр-пĕринпе улăштарнă, Книготорг чылай çĕнĕ учебниксем илсе килнĕ.

С. ШАДИН.

Шкул ачисем колхоз уйхирĕнче

КАНАШ, июлĕн 11-мĕш. **(Телефонпа).** Паянхи куна районри колхозсен уйхирĕсенче 2 пин ытла вĕренекен, 200 яхăн учитель ĕçлет. Аччари туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем колхозра пур ĕçе те пысăк хавхаланупа туса пыраççĕ. Вĕренекенсен ĕç отрячĕсене учительсем ертсе пыраççĕ.

Анчах хăшпĕр учительсем колхозсенчи ĕçрен пăрăнса çÿреççĕ-ха. Тĕслĕхрен, Аччари туллимар вăтам шкулта вĕрентекен Наталия Эрвуль тата Тарасина учительницăсем ку тарана çитсе пĕр ĕçе те хутшăнман-ха.

Ф. МАЛЫШКИН.

Ют çĕршывсенче

Италири фашизма хирĕçле движени

КАИР, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Америкăн нумаях пулмасть Италирен таврăннă журналисчĕ каласа панă тăрăх, мĕнпур Италире фашизма хирĕçле вăрттăн ушкăнсем ĕçлеççĕ. Вĕсен аллинче тăтăшах ĕçлекен икĕ радиостанци пур. Çар завочĕсенче саботажсемпе диверсиллĕ ĕçсем ытларах та ытларах пулса пыраççĕ, çар поезчĕсем сирпĕне-сирпĕне каяççĕ, нимĕç войскисем тăракан казармăсенче пушарсем тухаççĕ.

Нумаях пулмасть Италипе Швейцари чикки çывăхĕнче Домодоссол станцийĕ патĕнче антифашистсем Германин чĕртаварпа продовольстви турттарса пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Взрыв пулнă çĕрте нимĕçсен 50 салтакĕ ытла вилнĕ тата 100 салтака яхăн аманнă. Эшелона сирпĕнтерсе яракансем тарса пытаннă.

Германипе Италин çар çыннисем хушшинче пулса иртекен тытăçусем те çавăн пекех чылай ÿссе кайнă.

Германин Италири посолĕ Макензен Итали çĕршывĕнче хăйне хăй чăн-чăн хуçа пекех тыткалать. Гитлерăн Италире тăракан войскисем тĕрĕслипе оккупациллĕ çарсем пулса тăраççĕ. Гитлеровецсем хăйсен аллине чи кирлĕ транспорт узелĕсене, сăрт-ту промышленноçĕн, энергетикăн предприятийĕсемпе ытти тĕрлĕ предприятисене тытса илнĕ. Çаксем пурте Италири халăха питĕ тарăхтараççĕ. Италин урăнрах шухăшлакан политикĕсем çĕршыври фашизма хирĕçле тата вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсене пĕтĕмĕшпех ăнланаççĕ.

Финляндире политикăллă тата экономикăллă кризис çивĕчленсе пырать

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Швецин «Арбетарен» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Финляндире продовольстви кризисĕ питĕ çивĕчленсе çитни тата ĕç вăйĕ çитменни вăйлăн палăрать. Ĕç вăйĕ çитменнине кура пуринчен ытларах çул çитмен çамрăксене тата ачасене те ĕçлеттереççĕ. Шкул ачисене сывлăха пĕтерекен йывăр ĕçсем ĕçлеттереççĕ. Хăйсен аллисенче çĕр нумай тытакан хуçасем продовольстви тĕлĕшпе тухса тăнă йывăр лару-тăрупа малалла пуйнă çĕрте уса кураççĕ. Аграрисен партийĕн хăшпĕр представителĕсем вăрттăн суту-илĕве ирĕк пама ыйтнă, çакă вара вĕсене хăйсен усламĕсене татах та ытларах ÿстерме май парать.

Германире тулăпа ырашăн виççĕмĕш пайĕ пĕтнĕ

ЖЕНЕВА, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Трибюн де Женев» хаçат Германири официальнăй ушкăнсем Германире çуркунне вăйлă тăмсем ÿкнипе 2.500.000 гектар çинчи тулăпа ыраш пĕтни çинчен каланине илсе кăтартать. Ку вăл пĕтĕм акнă тулăпа ырашăн виççĕмĕш пайĕ пĕтни пулать.

Англин ялхуçалăхĕ вăйланни

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Çĕрĕç министерстви пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа Англире продовольстви туса кăларасси 30 процент ÿснĕ. Кăçал нихăçанхи пек мар вăйлă тырпул пулассине кĕтеççĕ. Тĕштырăсемпе çĕрулмине вăрçăчченхинчен 66 процент ытла акнă тата лартнă, пахчаçимĕçсем 50 процент ытла лартса хăварнă, фермерсем халиччен усă курнă концентрациллĕ апат-çимĕçсене улăштарма выльăхсем валли апат-çимĕç курăкĕсем çĕнĕрен 12 миллион тонна çитĕнтереççĕ. Сĕт илесси, çавăн пекех тата майракаллă шултăра выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ малтанхи виçерех юлнă, анчах сурăхсемпе сыснасем тата килти кайăк-кĕшĕкĕн йышĕ малтанхинчен чакнă.

Иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче 2,3 миллион акр çĕр сухаланипе танлаштарсан, кăçалхи çул 5,25 миллион акр çĕр сухаланă. Ялхуçалăхĕнчен кайнă квалификациллĕ работниксене улăштарма хĕрсем хăйсен ирĕкĕпе 27 пин çынна яхăн ĕçе кĕнĕ.

1939 çулти июнь уйăхĕнче Англире 52 пин трактор пулнă, 1942 çулти март уйăхĕнче—111 пин трактор шутланнă. Вăрçăччен пĕр-икĕ çул маларах Англире 100 комбайнран та сахалтарах пулнă, халĕ унта 1000 комбайн ытла.

АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ МАЙОТТА УТРАВНЕ ОККУПАЦИЛЕНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 2-мĕшĕнче Англин хĕçпăшаллă вăйĕсем Францин Майотта ятлă утравне, Камора утравĕсенчен пĕрине, Мадагаскартан çурçĕр-хĕвеланăç еннерех лараканскере, оккупациленĕ. Англи войскисене нимĕнле хирĕç тăни те пулман.

ЭЛЬ-АЛАМЕЙН ФРОНТĔНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕ Египетри çапăçăвăн çĕнĕ тапхăрне активлăн хатĕрленет. Обозсем фронт линийĕ патне çынсемпе танксене тата материалсене татти-сыпписĕр илсе пырса тăраççĕ.

Англи авиацийĕ сывлăшра активлăн кĕрешет, тăшманăн артиллери позицийĕсемпе горючи склачĕсене пĕтере-пĕтере тăкать, противникăн коммуникацийĕсене ишĕлтерет. Хĕвеланăçнелле туртăнакан çулсем çĕмĕрĕлнĕ лавсемпе тата машинăсемпе тулса ларнă.

Войскăсем вырнаçса тăрасси улшăнман, фронт линийĕ Эль-Аламейн патĕнчи тинĕсрен пуçласа кăнтăралла тата хĕвеланăçнелле тăсăлса выртать.

Авиацин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче тунă çухатăвĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пушхирте ултă эрне хушши пĕр чарăнмасăр çапăçса пырса, противникăн 300 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă. Противникăн çĕршер истребителĕсемпе бомбардировщикĕсене хытă сиенленĕ.

Противникăн çухатăвĕсем союзниксен çухатăвĕсенчен нумай пысăкрах. Союзниксен çĕмĕрнĕ самолечĕсенчен чылайĕшне юсанă, пилотсенчен нумайĕшĕ çăлăнса юлнă, халĕ ĕнтĕ вĕсем çĕнĕрен строя тăнă. Ултă эрне хушшинчи çапăçусенче 110 пилот тата çавăн чухлех самолет пĕтнĕ. Пĕлтĕрхи ноябрĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа Хĕвеланăç пушхирĕнче противникăн 483 самолетне персе ÿкернĕ, 1.000 самолетне ытла сиенленĕ.

Фашистсен Францири тискерлĕхĕ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕш. (ТАСС). Битюн, Аррас тата Булонь районĕсенче чугунçулсемпе телеграфа саботаж тунăшăн айăплас шутпа гитлеровецсем 50 француза заложник вырăнне тытса хупнă. Саботаж тунăшăн айăплисене тупса памасан, оккупациллĕ влаçсем татах та тепĕр 50 заложнике тытса хупассипе хăратаççĕ. Гитлерăн Лотарингири наместникĕ Бюркель Францирен тарса кайнă француз çамрăкĕсен тăванĕсене 8.000 çынна концентрациллĕ лагерьсене яма приказ кăларнă.

КАНАДĂРИ ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИ ЯЛАНХИ ÇАРСЕНЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЕ ЯМА ИРĔК ПАРАКАН ЗАКОНА ЫРЛАНĂ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Канадăри общинăсен палати правительствăна яланхи çарсене Канада тулашне яма ирĕк паракан закона иккĕмĕш хут вуласа сасăланă; 150 сасă закон майлă, 54 сасă хирĕç парса, вăл закона ырланă.

Палата йышăнни çакна пĕлтерет: вăл закона общинăсен палати виççĕмĕш хут вуланă хыççăн та ĕнтĕ ырлатех; ун хыççăн вара ăна пăхса тухма, сената параççĕ.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕ ГЕРМАНИ ШПИОНĔСЕНЕ АРЕСТЛЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Нью-Джерси штатĕнче «Германипе Америка союзĕ» ятлă фашистла организацин тата 12 членне арестленĕ. 22 хулара Германин подданнăйĕсем пурăнакан çуртсене ухтарнă. Ухтарнă çуртсенче пемелли хĕçпăшал, боеприпассем, радиоустановкăсем, фотографи аппарачĕсем тата пропаганда тумалли литература тупнă.

Нью-Йорк районĕнче «Германипе Америка союзĕн» тата 70 членне, çав шутра 15 хĕрарăма, арестленĕ. Вĕсем пĕри те США гражданĕсем пулса тămаççĕ, вĕсем «Германипе Америка союзĕн» пуçĕнче тăнă 29 çынпа, июлĕн 7-мĕшĕнче тытса хупнăскерсемпе, çыхăнса тăнă.

БРАЗИЛИЯ ЯПОНИПЕ ТУНĂ КИЛĔШĔВЕ ПĂРАХĂÇА КĂЛАРНĂ

ТОКИО, июлĕн 10-мĕш. (ТАСС). Домей цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бразили правительстви Япони подданнăйĕсене Амазонка шывĕн тăрăхĕнче çĕр тара илсе акма право парас тĕлĕшпе 1928 çулта Японипе тунă договора пăрахăçа кăларнă. Сведенисем кăтартса панă тăрăх, японецсем кунта 1 миллион гектара яхăн çĕр тара илсе пурăннă пулнă.

ФАШИСТЛА ОККУПАНТСЕН ТИСКЕР ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Гейдриха вĕлернĕ хыççăн Чехословакире 10.000 чеха асаплантарса вĕлернĕ. Апла пулсан та Германие хирĕç саботаж тăвасси ÿснĕçемĕн ÿссе пырать.

Югославире итальянецсем партизансен ĕçĕсемшĕн тавăрас шутпа хорват хресченĕсемпе словен хресченĕсене 800 çынна асаплантарса вĕлернĕ тата Югославири 6 яла, Фиуме хули патĕнчисене, пĕтерсе тăкнă. Сплитах çывăхĕнче оккупантсем 20 киле çунтарса янă, 12 çынна асаплантарса вĕлернĕ.

Ăмартура тунă çĕнтерÿсем

Сĕнтĕрвăрринчи судоверфьре социализмлă ăмăрту анлăн сарăлнă. Çакă вăл унти пуçламăш парторганизацийе завод директорĕ Жилочкин юлташ ăмăртăва вăйлатас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçленипе пулнă. Ку ĕçе вĕсем заводри актива анлăн хутшăнтарнă.

Речниксен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсене сÿтсе-явнă чухне рабочисем кашни кунах задание ирттерсе тултарма обязательствăсем илнĕ. Вĕсем вара хăйсен сăмахне пурнăça кĕртме тăрăшнă.

Заводри парторганизаци тата администраци вăтам тата кая юлса пыракан рабочисем çине ытларах çавăрăнса пăхнă, вĕсене ĕçре пулăшса пынă. Çавна пула май уйăхĕнче ĕç нормисене тултарса пыраймарн рабочисем те июнь уйăхĕнче лайăхрах ĕçленĕ. Пĕр пысăк цехра май уйăхĕнче 21 рабочи ĕç нормисене тултарса пыраймаи пулсан, июньре вара нормăсене тултарайманнисем 6 çын пулнă, халĕ вара çав цехри рабочисем пурте ĕç нормисене тултарса пыраççĕ.

Малта пыракан рабочисен опычĕпе ĕçлеме ытти рабочисене те вĕрентес шутпа завод администрацийĕ производствăллă канашлусем тăтăшах пухса ирттерет. Унта стахановецсем хăйсем мĕнле майпа ĕçлесе нормăсене икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарма пултарни çинчен каласа кăтартаççĕ. Заводри платник А. М. Белов юлташ нормăна кашни кунах 200 процент ытла тултарать. П. Куданов, П. Воинов, А. Офицеров платниксем, Н. Гордеев, К. Краличкин, И. Краличкин тимĕрçĕсем ĕç нормисене яланах икĕ хут тултарса ĕçлеççĕ.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, судоверфь коллективĕ кăçал 40 ăста рабочи вĕрентсе хатĕрлеме сăмах панă. Халăхи вăхăтра заводра 36 çынна ăсталăха вĕрентеççĕ. Тимĕрçĕ пулма 13 çын, столяр ĕçне — 2 çын, платник ĕçне — 17 çын тата механически отделра ĕçлеме 4 çын вĕренеççĕ. Тимĕрçĕ ĕçне вĕренекен учениксем А. Харитонова Жидков юлташсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕренсе çитрĕç, вĕсем нормăсене тултарса пыраççĕ. Кăçал платник ĕçне вĕреннĕ Юрий Шевнин нормăна 210 процента çити тултарса ĕçлет.

Судоверфь коллективĕ ăмăртса ĕçленипе июнь уйăхĕнчи плана та, малтанхи çурçуллăхăн программине те ирттерсе пурнăçа кĕртме пултарчĕ.

С. ПЕТРОВ.

Пирĕн землявсем

Пулеметчиксем

Пирĕн артиллери шăп виçĕ сехетре тăшман çине персе тăма тытăнчĕ. Снарядсемпе минăсем пуç тăррипе шăхăра-шăхăра иртеççĕ. Инçетрех мар, ăçта кирлĕ унта, шартлатса çурăлнă сасăсем илтĕнеççĕ. Сывлăш янăраса тăрать.

Наблюдательнăй пунктран артиллеристсем тĕл пенийĕ лайăх курăнать. Корректировщиксем хăш тĕле пемеллине телефон тăрăх пĕлтерсех тăраççĕ. Снаряд фашистсен дзочĕ çине пырса ÿкрĕ. Йывăç татăккисем тăпрапа тата çыннисен ÿчĕсемпе пĕрлешсе сывлăша вĕçсе кайрĕç. Хура та çăра тĕтĕм, пысăк юпа пек, пĕлĕтелле улăхса тăрать. Часах шартлата-шартлата çурăлни илт[illegible]. Ку вăл — гитлеровецсен боеприп[illegible] склачĕ çунать.

— Александр, хăратăн-и эсĕ?
— Çук.
— А эсĕ?
— Çук. Хамăрăн мухтавлă артиллеристсен чаплă ĕçне пăхса савăнса выртатăп...

Гарифулла хăйĕн шухăшне каласа пĕтереймерĕ. Командирнăй пунктран наступленине кайма пĕлтерчĕç. Артиллеристсемпе минометчиксем тата саперсем лайăх ĕçлерĕç. Саперсем, наступленине каймалли çул çинче çĕр хута ĕçлесе, икçĕр мина ытла тупнă.

Боевой операци планне тĕплĕн пăхса тухнă. Кашни боец, командир, политработник умра тăракан задачăна лайăх ăнланать. Фронт линийĕ çийĕпе хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсен звенийĕ вĕçсе иртрĕ. Герой-летчиксем хăйсен машинисене çавăрчĕç те, фашистсем çине пулеметсемпе тупăсенчен пеме тытăнчĕç. Çав вăхăтрах самолетсен шавĕпе пĕрле танксем шавлани пĕрлешсе кайрĕ. Артиллери те вăйлă персе тăрать. Пехотинецсем хырăмпа шуса пыраççĕ.

Ял çумне виçĕ танк пырса çитрĕç. Автоматчиксем вĕсем çинчен сике-сике анчĕç те çуртсем патнелле чупрĕç. Гитлеровецсем ялтан тухса-тухса тараççĕ. Анчах вĕсене пур-пĕрех совет воинĕсен пульли хăваласа çитет. Акă, красноармеецсем Александр Волковпа Гарифулла Назмудтинов хăйсен пулеметне ял çумĕнчен инçех мар, йывăç тĕмĕ патне вырнаçтарса лартнă. Çавтери лайăх позици!

— Волков, чердаксем çине тĕллесе пер, — приказ пачĕ взвод командирĕ Раплев.

Пулеметчик приказа лайăх ăнланчĕ. Фашистсен автоматчикĕсем кашни çурта, кашни чердака хăйне май позици туса хунă. Пирĕн пехота çине персе тăракан фашистсене пĕтермелле. Волков пулемечĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Тăхлан пульăсем чердаксем çине вĕçĕ-хĕррисĕр пыра-пыра тăрăнаççĕ.

— Çапар-ха вĕсене, Назмудтинов, витĕмлĕрех çапар... Шăмăршă тавралăшĕнче винтовкăран, пулеметран тата тупăран пенине «çапни» теççĕ. Кивĕ Чукалти «Красный пахарь» колхоз членĕ, халĕ Хĕрлĕ Çар боецĕ, Александр Петрович Волков фашистсене пулеметран «çапнине» командир лайăх сăнаса тăрать.

Чкаловски районри Хирти Пикшик колхозникĕ Гарифулла Назмудтиновпа Волков — пĕр пулеметнăй расчет. Çапăçу хирĕнче вĕсем пĕр-пĕрне пулăшса пыраççĕ.

— Давай, Волков, лайăхрах ăшалантар... А-а, çав кирлĕ-ха йытăсене...

Назмудтинов дискĕсене улăштарсах тăрать. Волков аллинче пулемет пĕр чарăнмасăр ĕçлет.

Пулеметнăй расчет хăйĕн позицине час-часах улăштарса тăрать. Акă, халĕ кăна фрицсене хăваласа кăларнă блиндажа кĕрсе, хăйсен пулеметне вырнаçтарса лартрĕç. Фрицсем ку блиндажран тухса кайма ĕмĕтленмен пулмалла. Артиллеристсемпе минометчиксем тата пехотинецсем ăшалантарнине чăтаймарĕç вĕсем. Хăйсен шалаварĕсемпе гимнастеркисене тăхăнма та ĕлкĕреймен. Блиндаж стенисене одеялсемпе карнă, урайне килте тĕртсе тунă пир сарса хунă. Пуçтутрисем, хĕрарăмсемпе ачапăчасен ботинкисем йăваланса выртаççĕ. Пирĕн мирлĕ граждансенне çаратнă япалисене кăна мар, хăйсен хĕçпăшалне те илсе тухса кайма ĕлкĕреймен. Акă вĕсем пăрахса хăварнă пулемет, инçетрех мар—миномет, минăсем...

Нумаях та персе тăмарĕç, Волковсен çывăхĕнче минăсем çурăлма тытăнчĕç. Позицие улăштармалла. Пулеметчиксем çырма урлă чупса каçрĕç те çĕнĕ позици йышăнчĕç. Çав вăхăтрах командир чупса çитрĕ.

— Ав, çав йывăç патĕнче фашист-пулеметчик пирĕн пехота çине персе тăрать. Сире тăшманăн огневой точкине пусарма приказ паратăп.

Волков пулемета йывăç çине тĕллесе вăрăм черетпе, чăрăна-чăрăна ик-виç хут печĕ. Фашистсен пулеметчикĕсем кунта хăйсен вилĕмне тупрĕç.

Тăшман темиçе хут та контрнаступленине кайма хапсăнчĕ, анчах кашнинчех унăн ĕмĕтне пирĕн воинсем çапа-çапа хуçрĕç. Пирĕн пулеметчиксем çине те пĕрре кăна мар тапăнчĕç вĕсем. Акă, фашистсен 8 автоматчикĕ расчет çине тапăнса пыраççĕ. Волков пулемечĕ шăп çав вăхăтра ĕçлеме чарăнчĕ. Мĕн тăвас-ха? Александр Петрович кăвăрт пулемета тĕрĕслерĕ. Пурте йĕркеллех, анчах пăсăлнă диска улăштармалла. Назмудтинов тепĕр диск тыттарчĕ. Сăлен-калтасем çывхарсах пыраççĕ. Пулеметчик татах та çывăхарах ячĕ те, ун хыççăн пĕр çын юлмиччен шăлса тăкрĕ.

Командованин боевой задачине ăнăçлăн пурнăça кĕртрĕç. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн та хăюллăн кĕрешнĕ красноармеецсем тата командирсемпе политработниксем правительство наградине илчĕç. Вĕсем хушшинче Чăваш республикинчи колхозниксем — чăваш Волков тата тутар—Назмудтинов. Вĕсем иккĕшĕ те «За боевые заслуги» медаль илчĕç.

Кĕçĕн политрук Т. МАЙОРОВ.
Действующи арми.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

НАРОДНЫЙ КОМИССАРИАТ СОЦИАЛЬНОГО ОБЕСПЕЧЕНИЯ ТАТАРСКОЙ АССР

объявляет прием учащихся в Казанскую учебно-производственную мастерскую.

Мастерская готовит квалифицированных мастеров кожобувного и валенофетрового дела.

Принимаются инвалиды (говорящие и глухонемые) в возрасте 16—35 лет (для инвалидов отечественной войны делаются исключения).

Срок обучения один год.

Принятые обеспечиваются общежитием, стипендией, столовой.

При поступлении требуется заключение ВТЭК, направление Райсобеса, или с/совета, или колхоза, или военно-лечебных учреждений.

Паспорт предъявляется лично.

Начало занятий 1-го августа.

Адрес: г. Казань, ул. Сакко-Ванцетти, 27/8 (около вокзала).

ГОСУДАРСТВЕННОМУ СОЮЗНОМУ ТРЕСТУ

требуются на постоянную работу: инженеры-строители, техники-строители, десятники, агенты, завскладами, кладовщики, плотники, бетонщики, арматурщики, каменщики, слесаря, автослесаря, монтеры, разнорабочие, шоферы, маляры, штукатуры.

Обеспечиваются общежитием, обедом и ужином.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Володарского, д. 5 (Дом Печати), 2-й этаж, комн. 15, отдел кадров.

ТРЕБУЮТСЯ

для работы в Чебоксарах: главный бухгалтер, бухгалтер-ревизор, инженер по деревообработке, инженер-экономист, статистик, завхоз, юрист-консульт и машинистка.

Для работы в районах: старшие бухгалтера и бухгалтера.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, дом № 36, Главлесосбыт.

2—2.

Чувашскому радиокомитету требуется квалифицированный диктор на чувашском языке для утренних и вечерних радиопередач. Оплата по соглашению.

Обращаться в любое время по телефонам №№ 2—60, 6—44, 4—11, 6—04 и 5—44.

2—1.

Чебоксарскому пивзаводу требуются рабочие: 1) сушильщицы по сушке сухарей, 2) разливальщицы, 3) солодовщицы.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская ул., 35, Пивзавод.

3—2.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ

серой масти, 8 лет, без особых примет.

Сообщить по адресу: Кугеси, Маслозавод.

2—2.

РАЗЫСКИВАЕМ ЛОШАДЬ.

С подножного корма в районе оврага реки Кайбулки сбежала кобыла жеребая, темно-гнедой масти, грива подстриженная, год рождения 1927, рост 143 см.

Знающих местонахождение просьба сообщить по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 25, Промышленный Банк.

Будет выдано вознаграждение.

3—3.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 883 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 319. Ф. 6. 58 64